# Çĕнтерÿ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

20 (8587) № * Юнкун, 2018 çулхи пуш (март) уйăхĕн 21-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


# Муркашсем пысăк пуçарулăхпа сасăларĕç

**Мартăн 18-мĕшĕнче Муркаш район çыннисем, мĕнпур Раççей халăхĕ пекех, РФ Президенчĕн суйлавне пысăк пуçарулăхпа хутшăнчĕç. Ял çыннисем гражданла яваплăха туйнăран, çĕршыв пуласлăхĕ пирки шутланăран активлă сасăларĕç.**

**Муркашсем те, анлă çĕршыври ытти регионсенче пурăнакансем пекех, Владимир Путин кандидатшăн хăйсен сассисене ытларах пачĕç. Çапла майпа çĕршыв лидерне шаннине çирĕплетрĕç.**

**Аяларах çĕршыв, республика, район шайĕнчи суйлавсен пĕтĕмлетĕвĕсемпе паллаштаратпăр. Малтанхи кăтартусене суйлав комиссийĕсен материалĕсенчен илнĕ.**



**ÇĔРШЫВРА САСĂЛАНĂ**

**Владимир Путиншăн - 76,66 процент,**
**Павел Грудининшăн - 11,8 процент,**
**Владимир Жириновскийшăн - 5,66 процент,**
**Ксения Собчакшăн - 1,67 процент,**
**Григорий Явлинскийшăн - 1,04 процент,**
**Борис Титовшăн - 0,76 процент,**
**Максим Сурайкиншăн - 0,68 процент,**
**Сергей Бабуриншăн - 0,65 процент.**
***Суйлава хутшăннă - 67,49 процент.***

**РЕСПУБЛИКĂРА САСĂЛАНĂ**

**Владимир Путиншăн - 77,29 процент,**
**Павел Грудининшăн - 12,3 процент,**
**Владимир Жириновскийшăн - 5,29 процент,**
**Ксения Собчакшăн - 1,36 процент,**
**Максим Сурайкиншăн - 0,7 процент,**
**Борис Титовшăн - 0,57 процент,**
**Григорий Явлинскийшăн - 0,56 процент,**
**Сергей Бабуриншăн - 0,53 процент.**
***Суйлава хутшăннă - 76,23 процент.***

**РАЙОНТА САСĂЛАНĂ**

**Владимир Путиншăн - 79,02 процент,**
**Павел Грудининшăн - 11,32 процент,**
**Владимир Жириновскийшăн - 5,72 процент,**
**Ксения Собчакшăн - 0,98 процент,**
**Максим Сурайкиншăн - 0,55 процент,**
**Сергей Бабуриншăн - 0,46 процент,**
**Борис Титовшăн - 0,43 процент,**
**Григорий Явлинскийшăн - 0,29 процент.**
***Суйлава хутшăннă - 93,40 процент.***

**Сăн ÿкерчĕксенче: Муркашри 1201 номерлĕ суйлав участокĕнче ял çыннисем активлă сасăлаççĕ.**

**Л. ПАВЛОВА сăн ÿкерчĕкĕсем.**



Районта: ĕнер, паян, ыран

## Информаци кунĕ

Чăваш Енри ытти районти пекех, паян Муркаш районĕнче те пĕрлехи информаци кунĕ иртет. Республикăри тата районти ертÿçĕсем ушкăнсемпе ял тăрăхĕсенче пулаççĕ. Вырăнсенчи предприятисемпе организацисене çитсе ĕç коллективĕсемпе тĕл пулусем ирттереççĕ. Ку хутĕнче информаци ушкăнĕсем Раççей Федерацийĕн Президенчĕн суйлавĕ çинче чарăнса тăраççĕ, çавăн пекех Раççей Президенчĕ В. Путин Федераци Канашне тухнă Çырăва сÿтсе яваççĕ. Информаци кунĕ вăхăтĕнче ертÿçĕсем граждансене йышăнаççĕ, вĕсен ыйтăвĕсене хуравлаççĕ.

## Ăсталăха тĕрĕслеççĕ

"Çулталăкри учитель", "Чи лайăх класс ертÿçи" конкурссен район тапхăрĕ пырать. Учительсем хальхи вăхăтра уçă уроксем ирттереççĕ, класс тулашĕнчи мероприятисене кăтартаççĕ. "Çулталăкри учитель" конкурса хутшăнакансем Чуманкасси шкулĕнче, класс ертÿçисен конкурсне хутшăнакансем Çатракасси шкулĕнче хăйсен пултарулăхĕпе паллаштараççĕ.
Ыран Муркашри ача сачĕсенче "Çулталăкри воспитатель" конкурс пуçланать. Районти воспитательсем те хăйсен прфесси ăсталăхне кăтартса парĕç.
Çитес эрнере вара хушма пĕлÿ паракан учреждениссенче вăй хуракан педагогсен професси ăсталăхĕн "Эпир санпа педагогсем, темĕн те пĕлетпĕр" конкурсĕ иртет.

## 90 çулта

Мăн Токшикра пурăнакан Фекла Ивановна Никифорова иртнĕ кунсенче 90 çул тултарнине паллă тунă.
Юбиляра çак паллă кунпа халăха социаллă пулăшупа тивĕçтерекен Муркашри центр ертÿçи О.Иванова, Турай ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Е. Орлов саламланă. Ачисемпе мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем пуррипе савăнса пурăнакан Фекла Никифоровăна тăван кĕтес, тăван район аталанăвне пысăк тÿпе хывнăшăн тав тунă.
Вырăнти культура ĕçченĕсем те юбиляра саламласа юрă-ташăпа савăнтарнă.

## Тĕл пулусем ирттереççĕ

Районти вĕренÿ учрежденийĕсенче виççĕмĕш чĕрĕк вĕçленсе пынипе пĕрлех тĕрлĕ тĕл пулу иртет: çак вăхăтра "Полици тата ачасем", "Манăн пулас професси" акцисем пыраççĕ.
Çавна май шкулсенче çул çитменнисемпе ĕçлекен инспекторсем саккунпа йĕркелĕх пирки каласа аса илтереççĕ, асăрхаттару калаçăвĕсем йĕркелеççĕ. Тĕрлĕ професси çыннисем вара ачасене вăл е ку професси пирки пĕлтереççĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

Саламлатпăр

Пирĕн хисеплĕ те юратнă аттене, мăшăра – Шаптак Муркашра пурăнакан **Алексей Михайлович МАГАЕВА** юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Сывлăху сан çирĕп пултăр, утас çулу яланах такăр пултăр. Тавах сана яланах юнашар пулнăшăн, тĕрĕс канашсем панăшăн, пире ăнланнăшăн, юратнăшăн, пурне те пулăшма хатĕрришĕн.



Çăл кусне валакĕ кирлĕ
Шăнкăр-шăнкăр шыв юхма,
Аттеçĕм, пире эс кирлĕ
Туслă йышпа пурăнма.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хунямăшĕ, ывăлĕ, икĕ хĕрĕ тата кĕрӳшĕ, тăванĕсем.**

Пирĕн хаклă та хисеплĕ çыннăмăра – Шаптак Муркашра пурăнакан **Фаина Алексеевна НИКОЛАЕВĂНА** юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх, çăлкуç пек тапса тăракан вăй-хал, юхан шыв пек вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, кун-çулу хĕвел пек çутă, сукмаку таса та такăр пултăр. Мĕн шутланисем яланах пурнăçланса пыччăр.



Каçпа выртсан канлĕх килтĕр,
Ирпе тăрсан ырлăх пултăр.
Вăрманта мĕн чухлĕ хурăн –
Çавăн чухлĕ эсĕ пурăн.

**Ăшă салампа: ашшĕпе амăшĕ, мăшăрĕ, шăллĕсем çемйисемпе, йăмăкĕ çемйипе, мăнукĕсем, тăванĕсем.**

Хисеплĕ те хаклă мăшăра, аннене, кукамая, мамака – Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан **Зоя Филипповна ГОЛУБЕВĂНА** 85 çулхи юбилей ячĕпе чунтан тухакан ăшă туйăмсемпе саламлатпăр. Пире, ачусене, пурнăç çулĕ çине тухма пулăшнăшăн чĕререн тав тăватпăр. Эсĕ пирĕншĕн ылтăн-кĕмĕлтен те хаклăрах. Сана юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, иксĕлми вăй-хал сунатпăр, юрататпăр, хисеплетпĕр. Пире савăнтарса пурăнма Турри сана татах та нумай çул усратăр.



**Салампа: мăшăрĕ, хĕрĕсем, ывăлĕсем, кĕрӳшĕсем, кинĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем.**

Пирĕн ылтăн-кĕмĕлтен те хаклăрах çыннăмăра – Муркаш ялĕнче пурăнакан **Надежда Константиновна ЧЕРНОВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн чи ăшă кăмăлпа саламлатпăр. Эс пурришĕн Турра тав тумашкăн сăмах та çитмест. Пирĕншĕн тăрăшнăшăн çĕре çити тайма пуç. Тавах сана яланах юнашар пулнишĕн, пурне те пулăшма хатĕрришĕн.



**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ ывăлĕ, кинĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем.**

Муркаш салинче пурăнакан, нумай çул Муркашри вăтам шкулта кĕçĕн классене вĕрентекен **Надежда Константиновна ЧЕРНОВĂНА** ылтăн юбилей ячĕпе пĕтĕм чĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе саламлатпăр.



Тăвансемпе пĕрле савăнса пурăнма, килекен кашни куна хавас кăмăлпа кĕтсе илсе иртерме çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, вăрăм кун-çул, юрату, телей сунатпăр. Эсĕ пирĕншĕн яланах чи лайăх тĕслĕх, ĕçрен хăраман, ырă ĕçсем тума хистекен хаклă тăван. Пирĕнпе пĕрле яланах пулма Турă пулăштăр.

**Салампа: аппăшĕ çемйипе, икĕ йăмăкĕ çемйисемпе.**

Конференци

# Пултарулăха чатăр ан картăр

Сывлăх енчен хăш-пĕр кăлтăклă çын пурнăçа ытларах хаклама пĕлнине чылай ĕç-хĕл çирĕплетет. Тепĕр чухне вĕсен пултарулăхне куçа шывлантармасăр пăхма вăй-хал çитеймест, иксĕлми ăсталăхĕ чуна çӳçентерет. Вĕсене асăрхамасăр хăварма юрамастех, таланчĕсене вара чаршав хыçĕнчен кăларма пулăшмалла.

Пурнăçа хаклама пĕлекен пултаруллă çынсем пухăнчĕç çак кунсенче район администрацийĕн савăнăçлă ларусен залне. Куç курманнисен обществăлла организацийĕн районти уйрăмĕ çакăнта хăйĕн конференцийĕнче иртнĕ çула пĕтĕмлетсе умри тĕллевсене палăртрĕ. Районти уйрăм Муркашпа Элĕк районĕсене пĕрлештерет, çавăнпа та ĕç-хĕле пĕтĕмлетме кӳршĕсем те килсе çитнĕ. Чи малтанах районти уйрăм ертӳçи А. Михайлова иртнĕ çул пурнăçланă ĕçсем çинче чарăнчĕ.

Ертӳçĕ каланă тăрăх, çулталăк пуçламăшĕ тĕлне организацире 208 инвалид учетра тăнă, вăл шутран 113-шĕ хамăр районта пурăнать. Тин кăна инвалида тухнă çынсене тупса палăртасси, вĕсене учета илесси организацин тĕп ĕçĕсенчен пĕри пулса тăрать. Ку тĕлĕшпе йывăрлăха лекнĕ çынна вăхăтра тимлĕх уйăрни, ăна пĕрлехи йыша илсе унпа тĕрлĕ ĕнлĕ ĕçлеме тăрăшни – çыншăн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Иртнĕ çул çапла сакăр çынна çĕнĕрен общество йышне илнĕ.

Общество кашни уйăхра тĕл пулу ирттерме тăрăшать. Отчетлă тапхăрти 12 бюрора 65 ыйту тишкернĕ. Кусем йăлтах куç курман çынсен ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă.

Йывăрлăхри кашни çынна реабилитаци кирлĕ. Социокультура ĕçĕсене ирттересси, пултарулăха тупса палăртасси асăннă обществăшăн приоритетлă пулса тăрать. Мероприятие усăллă, чылайччен асра юлмалла ирттерессинче районти тĕп библиотека реабилитаци конкурсĕсем йĕркелеме, литература композицийĕсем хатĕрлеме пулăшнине палăртмалла. Вĕсенчи тема расна, кашни тĕл пулăва тĕрлĕ служба ĕçченне явăçтарма тăрăшаççĕ. Çулталăкри 25 мероприятие 415 инвалид хутшăнма пултарнă.

Общество членĕсем районти ĕç-хĕлпе кăна чикĕленмеççĕ, республика тулашĕнче те малти вырăнсене йышăнаççĕ. Иртнĕ çул вĕсем пĕтĕмпе 19 конкурспа мероприятире ăсталăх кăтартма пултарнă.

Çак йышра тăракансем хăйсем тĕллĕн те мероприятисем йĕркелеççĕ. Ку енĕпе Владимир Александрова, Александр Нестерова ырăпа палăртса хăвармалла, вĕсем культура тата спорт мероприятийĕсем йĕркелеççĕ.

Общество членĕсем стена хаçачĕ калăплама та хастар. Вĕсем ку енĕпе республикăра та ырă тĕслĕх кăтартаççĕ, кăçал та республикăра чи пултаруллисем пулчĕç.

Патшалăх шайĕнче индивидуаллă реабилитаци программи йĕркелени пулăшу кирлĕ çынсемшĕн питех те меллĕ пулнине палăртмалла. Çак программăпа 40 çын тифлофлешплеер илме пултарнă. Çулталăк хушшинче вара çынсем ИПР программипе реабилитацин 23 тĕрлĕ техника хатĕрне тивĕçнĕ.

Чылайăшĕ "калаçакан кĕнеке" илсе вулама пултарать. Иртнĕ çул республикăри Толстой ячĕллĕ библиотека районти тĕп библиотекăра куç курманнисене тивĕçтермелли пункт уçрĕ.

Конференци ĕçне район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А. Миронов хутшăнчĕ. Вăл район аталанăвĕ çинче чарăнчĕ, обществăри çынсене районпа республика шайĕнче пуçаруллă пулнăшăн тав турĕ.

Обществăлла организацин республикăри ертӳçи Ю. Сергеев районти ĕçе пысăк хак пачĕ, республикăра муркашсем пултаруллисенчен пĕри пулнине палăртрĕ, "Лучшая МО ВОС – 2017" смотр-конкурсра иккĕмĕш вырăн тивĕçнине çирĕплетекен дипломпа чысласа хавхалантарчĕ. Хастар ветерансене "Ветеран ВОС" удостоверенине парса саламларĕ.

Конференцие хутшăннисемшĕн районти тĕп библиотека ĕçченĕсем общество ĕçĕ-хĕлĕ пирки хатĕрленĕ презентаци, "Муркаш" фольклор ансамблĕн юрри-ташши питех те вырăнлă пулчĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Налук инспекцийĕнче

# Уçă алăксен кунĕсем

Йăлана кĕнĕ тăрăх, Федераци налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 8-мĕш номерлĕ инспекцийĕ çуллен пĕрре кăна мар уçă алăксен кунне ирттерет. Çак кунсенче çын ăçта пурăннине пăхмасăрах инспекцире кирек кам та 3-НДФЛ декларацие тултарассипе, налук вычетне шутлаттарассипе, ытти ыйтупа консультаци илме пултарать. 2017 çулта илнĕ тупăшсем пирки майăн 3-мĕшĕнчен кая юлмасăр деклараци тăратмалли пирки ан манăр.

Уçă алăксен кунĕсенче инспекци вăрамлатнă кун йĕркипе ĕçлет:

мартăн 23-мĕшĕнче – 9 сехетрен тытăнса 20 сехетчен;

мартăн 24-мĕшĕнче – 10 сехетрен тытăнса 15 сехетчен;

апрелĕн 23-мĕшĕнче – 9 сехетрен тытăнса 20 сехетчен;

апрелĕн 24-мĕшĕнче – 9 сехетрен тытăнса 20 сехетчен.

**Ю. ЕГОРОВ,**
**РФ налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 8-мĕш номерлĕ инспекцийĕн пуçлăхĕн çумĕ.**

Республикăра

# Хастар ертӳçĕ



Республикăра Чăваш Енри хĕрарăмсен пĕрлĕхĕ йĕркеленĕ "Женщина – лидер" конкурса пĕтĕмлетнĕ. Уяв числавĕ оперăпа балет театрĕнче иртнĕ. Ăна пултаруллă тата çамрăк ертӳçĕсене тупса палăртас, вĕсене предприятие, организацие çитĕнӳ çулĕ çине кăларнăшăн тата малашне те ăнăçлă ĕçлеме хавхалантарас тĕллевпе йĕркеленĕ. Тĕп кăтарту шутне вара коллектив тивĕçнĕ ӳсĕмсене кĕртнĕ.

Уява Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьевпа унăн мăшăрĕ Лариса Юрьевна тата Чăваш Енти хĕрарăмсен пĕрлĕхĕн ертӳçи Алевтина Федорова хутшăннă. Конкурса тăватă номинаципе ирттернĕ.

Муркаш районĕн чысне 27 номерлĕ "Путене" ача сачĕн ертӳçи Изабелла Ферапонтова тивĕçлĕ шайра хӳтĕленĕ. Хастар ĕçчен "Лучший инновационный руководитель" номинаци çĕнтерӳçи пулса тăнă.

Палăртма кăмăллă, Изабелла Владимировна – ĕçре пысăк ăсталăх пухма ĕлкĕрнĕ хастар ертӳçĕ. Вăл ертсе пыракан педагогсен йышлă коллективĕ килĕштерсе ĕçлесе тата пĕлĕве ӳстерсе пырать, аса садне 280 ытла ача çӳрет.

Асăннă ача сачĕ виçĕ хутчен грант тивĕçме пултарчĕ, çавăн пекех – Пĕтĕм Раççейри вĕренӳ учрежденийĕсен "700 лучших образовательных организаций" уçă конкурсĕн лауреачĕ те. Çак çитĕнӳсенче ертӳçĕ тăрăшулăхĕпе пултарулăхĕ, паллах, пысăк пĕлтерĕшлĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Юридици пулăшăвĕ

# Тӳлевсĕр пулăшăва тивĕçекенсен йышĕ ӳсрĕ

**Кăçалхи февралĕн 24-мĕшĕнчен тытăнса Чăваш Республикин "О бесплатной юридической помощи" Саккунне кĕртекен улшăнусем вăя кĕчĕç. Унпа килĕшӳллĕн тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ илме пултаракан çынсен категорине анлăлатнă.**

Çапла вара тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ илмелли правăпа граждансен татах çак категорийĕсене тивĕçтернĕ:

– çие юлнă хĕрарăмсене, çие юлнипе е ача çуратнипе отпускрисене, виçĕ çула çитмен ачана пăхса пурăнакансене;

– 14 çула çитмен ачана пăхса пурăнакан пĕччен ашшĕ-амăшне (18 çула çитмен инвалид ачана пăхса пурăнакана);

– 3-мĕш ушкăн инвалидне, енчен те харăсах хăлха тата куç е хăлха тата калаçу функцийĕсем йĕркеллĕ мар пулсан;

– Иккĕмĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнче фашистсен концлагерĕсенче тата ирĕксĕрлесе тытса усрамалли ытти вырăнта çул çитмен узниксем пулнисене.

Çапла вара халĕ республикăра квалификациллĕ юридици пулăшăвне тӳлевсĕр майпа граждансен 41 категорийĕ илме пултарать.

Маларах Чăваш Республикин саккунĕпе килĕшӳллĕн тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕпе çаксене тивĕçтерме йышăннă пулнă:

– пĕчĕк тупăшлă граждансене;

– 1-мĕш тата 2-мĕш ушкăн инваличĕсене;

– нумай ачаллă çемьесене;

– Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсене, çар операцийĕсен ветеранĕсене, Раççей Федерацийĕн Геройĕсене, Совет Союзĕн Геройĕсене, Социализмла Ĕç Геройĕсене, Раççей Федерацийĕн Ĕç Геройĕсене;

– инвалид ачасене, тăлăх ачасене, ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр юлнă ачасене;

– ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр юлнă ачана хăйсен çемйине йышăннисене тата йышăнма кăмăл тунисене т. ыт. те.

Тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕн патшалăх системи шайĕнче тӳлевсĕр юридици пулăшăвне Чăваш Республикин патшалăх влаç органĕсенче тата вĕсене пăхăнса тăракан учрежденисенче, адвокатсем патĕнче, нотариуссем патĕнче (нотариус ĕçĕсене пурнăçласси енĕпе), Чăваш Республикин Ĕç министерствин "Центр предоставления мер социальной поддержки" хысна учрежденийĕнче тата районсенчи социаллă хӳтлĕх пайĕсенче илме май пур.

***Çыхăнмалли телефонсем:***

**Чăваш Республикин Адвокатсен палати – тел.: 8 (8352) 22-26-08.**

**Чăваш Республикин Ĕç министерствин "Центр предоставления мер социальной поддержки" хысна учрежденийĕ – тел.: 8 (8352) 23-11-75.**

**Чăваш Республикин Юстици тата пурлăх хутшăнăвĕсен министерстви – 8 (8352) 62-33-53, 64-20-70.**

**Хамăр инф.**

Сунарçăпа калаçатпăр

# Сунар йĕркине пăхăнмалла

Республика территорийĕнчи тискер чĕрчунсемпе вĕçен кайăксене сыхлас ĕçе хальхи вăхăтра Чăваш Республикин Çут çанталăк ресурсĕсемпе экологи министерствине пăхăнса тăракан "Чĕрчунсен тĕнчине тата уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсене пăхса тăрассине, унпа усă курассине йĕркелекен дирекци" хысна учрежденийĕ йĕркелесе пырать. 2015 çулччен ку ĕçшĕн республикăри госохотрыбслужба яваплă пулса тăнă. Çак ĕçсемшĕн пирĕн районта пĕр инспектор яваплă. Район территорийĕнче вара икĕ сунар хуçалăхĕ пур. Кунта çакна палăртса хăвармалла: хуçалăхсене индивидуаллă предпринимательсем арендăна илсе тытса пыраççĕ. "Моргаушское" сунар хуçалăхне "Моксур" чикĕллĕ яваплăхлă общество, "Тораевское" сунар хуçалăхне "Средняя Волга" чикĕллĕ яваплăхлă общество тытса тăраççĕ. Асăннă бизнес хăйне май йĕркеленсе пырать: кунта вăхăт çитсен сунарçăсене сунара тухма ирĕк параççĕ, сунар ĕçне йĕркелеççĕ, сунарçăсен ĕçне пăхса хак параççĕ. Çак ĕçсене пурнăçланăшăн вĕсем нормативсене кура укçа пухаççĕ.

Маларах асăннă икĕ сунар хуçалăхĕнче те пĕрер инспектор ĕçлет. Çав хуçалăхсенче пурте çӳреме пултаракан сунар лаптăкĕсем тата "Зеленая и лесопарковая" зона пур. Асăрхаттарса калатăп, иккĕмĕшĕнче сунара тухма юрамасть.

Асăрхаттарусемпе ăнлантарусем пулнине пăхмасăрах, йĕркене пăсакан сунарçăсем те пирĕн хушăра тĕл пулаççĕ-ха. Çапла вара сунар ĕçне тивĕçлĕ шайра тытса пырас тесе 2017 çулта пĕрлехи вăйпа сунар йĕркине пăснă 16 тĕслĕхе çиеле кăлартăмăр, айăплисене саккун умĕнче тивĕçлĕ явап тыттартăмăр. Палăртса хăваратăп, 16 административлă протокола та патшалăх сунар надзорĕн инспекторĕ çырнă. Уйрăммăн илсен, йĕркене пăснă 3 тĕслĕхе "Тораевское" сунар хуçалăхĕнче (инспекторĕ Г. Николаев), 8 тĕслĕхе "Моргаушское" сунар хуçалăхĕнче тупса палăртнă. Ытти протокола вара пурте çӳреме пултаракан сунар лаптăкĕсенче çырма тиврĕ.

Тĕрĕслев серепине тĕрлĕ çын лекет. Вĕсем хушшинче ялти ĕççĕр çынсем те, пысăк шайри ертӳçĕсем те пур. Апла пулин те пурне те саккунпа килĕшӳллĕ явап тыттарма тăрăшатпăр: саккун умĕнче пурте пĕр тан. Теприсем çут çанталăка сыхлас ĕçре вăй хураççĕ пулин те, ăна сăтăр тăвассинчен иménсе тăмаççĕ. Акă пĕр тĕслĕх.

Иртнĕ çулхи чӳк уйăхĕнче Г. гражданин-пуçлăх сунара тухма ирĕк илмесĕрех "Тораевское" сунар хуçалăхĕнче хир сысни тытать. Ун тĕлĕшпе административлă протокол çыртăмăр. Кун пек тĕслĕх унăн 2016 çулхи раштавра та пулнăран, ун пирки айăплав ĕçĕсем малалла пыраççĕ. Çак вăхăтра вăл 1 хир сысни тытма паракан ирĕкпе 3 хир сысни тытни паллă пулчĕ. Кунпа халĕ тивĕçлĕ органсем ĕçлеççĕ.

Кăçалхи кăрлач уйăхĕнче Анатри Панкли ялĕ патĕнчи вăрманта браконьерла ĕç пулса иртрĕ. "Сунарçăсем" 3 хир сыснине персе ӳкерчĕç. Вăхăт каç енне пулнăран, сăтăр кӳрекенсене çав самантрах тытса чарма май килмерĕ. Анчах вĕренĕн вĕçĕ пур теççĕ. Халĕ çав "ĕçченсем" пирки полицейскисем уголовлă ĕç пуçарчĕç.

Районти сунарçăсем хĕле кĕнĕренпе иртнĕ вăхăтра 5 кашкăр тытма пултарчĕç. Шута илнĕ тăрăх татах 3 кашкăр ирĕкре çӳрет. Вĕсене тытассипе ĕçлетпĕр.

Юлашки çулсенче сунар лаптăкĕсенче хир сыснисем ĕрчесе кайрĕç. Çакă район территорийĕнче "Зеленая зона" тунипе те çыхăннă. Çакна та хушса калас килет. Иртнĕ çул "Ударник" хуçалăх, кукуруза пуссине пуçтарса пĕтерейменрен, хир сыснисем унта апат пуррипе аван пурăнаççĕ. Пăрачкав районĕнче африка чумипе вилнĕ хир сыснисене тупса палăртнă хыççăн вĕсене массăллă тытма йышăннă. Çакна валли "Моргаушское" сунар хуçалăхĕ 55 ирĕк панă, "Тораевское" хуçалăх – 11, "Зеленая зона" тăрăхĕнче – 15. Ирĕк панипе тĕллевлĕ усă курса сунарçăсем кĕске хушăрах 61 пуç хир сысни тытма пултарчĕç. Кунта çакна палăртмалла, сунар сезонĕ ака уйăхĕн 1-мĕшĕччен пырать. Апла пулсан сунарçăсем валли ĕç калăпăшĕ пур.

**С. КСЕНОФОНТОВ,**
**ертсе пыракан специалист.**

Райадминистрацире

# Хисеп грамотипе наградăланă

Район администрацийĕн 2018 çулхи мартăн 5-мĕшĕнчи 193-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

1. Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парассипе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн:

– **Светлана Германовна ВЯЗОВĂНА**, Оринин вăтам шкулĕн пуçламăш классен учительне;

– **Федор Александрович РЫЛИНА**, Чуманкасси вăтам шкулĕн директорне.

2. Вĕренӳ сферинче нумай çул тăрăшса вăй хунăшăн:

– **Вера Васильевна ДАНИЛОВĂНА**, Оринин вăтам шкулĕн служба пӳлĕмĕсене тасатса тирпейлекенне;

– **Алексей Михайлович МАГАЕВА**, "Путене" ача сачĕн "Лебедушка" структура подразделенийĕн газооператорне.

3. Архив ĕçĕнче нумай çул тăрăшса вăй хунăшăн:

– **Ирина Михайловна НИКОЛАЕВĂНА**, Муркаш район муниципалитет архивĕн директорне.

Хăй ирĕкĕпе ырă ĕç тăваканăн çулталăкĕ

# Тăрăшнине тивĕçлипе хакларĕç

Ирĕке кайнă вут-çулăмпа кĕрешекенсен, çăлавçăсен ĕçĕ-хĕлĕпе çывăх паллашни, вĕсен ĕçне лайăх пĕлни нумайăшне йăнăш утăм тăвасран сыхланма пулăшать. Çакă уйрăмах çамрăк ăрушăн пĕлтерĕшлĕ. Вут-çулăм вăл тетте мар. Çакна ача садне çӳрекенсем, шкулта вĕренекенсем ачаллах ăша хывни пурсăмăра та ыранхи куна шанчăклăрах пăхтарать. Халĕ каланине аслисен самантлăха та асран кăларас марччĕ. Ахальлĕн?.. Пирĕн районта çак ыйтуран пăрăнассипе тĕрлĕ ĕç ирттереççĕ: тĕрĕслевсем, рейдсем, ăнлантару калаçăвĕсем, профилактика стенчĕсем уçни т. ыт. те. Тĕрлĕ шайри ачасем хушшинче пушар хуралĕн тематикипе ирттерекен алă ĕç выставкисем, ӳкерчĕксен галерейисем те ӳсекен ăрăва мĕн пĕчĕкрен пушар хăрушлăхне ăнланма вĕрентеççĕ.

"Ăçта пулман пуль вут сӳнтерекен, хăй тивĕçне сутман йывăрлăхра. Чи йывăр вăхăтра та, апăрша, вĕçне çити кĕрешнĕ çулăмпа...". Иртнĕ икĕ уйăхра çамрăк техниксен станцийĕнче ВДПОн районти уйрăмĕн пуçарăвĕпе алă ĕç тата ӳкерчĕк выставкисем ĕçлерĕç. Кашни тĕслĕхрех пушар хуралĕнче тăракансен йывăр ĕçĕ тата вĕсен паттăрлăхĕ тĕп вырăнта пулчĕ. Палăртса хăвармалла, асăннă выставка юлашки çулсенче тăтăшах иртрĕ. Кун пирки çамрăк техниксен станцийĕн директорĕ Олег Юлин çапла каласа парать:

– Пĕтĕм Раççейри ирĕклĕ пушар хуралĕн пирĕн районти уйрăмĕ ачасем хушшинче пушар хăрушсăрлăх пĕлĕвне сарассипе тĕллевлĕ ĕçленине эпир те йышăнтăмăр. Пĕрлехи ĕç районти шкул ачисене Раççейри тата Чăваш Республикинчи, хамăр районти пушар хуралĕн аталанăвĕпе çывăхарах паллашма, пушар хуралĕнче тăракансен паттăрлăхне курма, пушар хăрушсăрлăх правилисене вĕренме май парать. Ку вăл пирĕншĕн те ют мар.

Ачасен ĕçĕсемпе паллашнă май кашнийĕн тăрăшулăхĕ куç умне тухса пычĕ: хытă хутран ăсталанă пушар машини, шыв турттаракан урапасем, полиэтилен кĕленчесенчен тунă огнетушительсем, ирĕке кайнă çулăмпа кĕрешекенсем т. ыт. те. Комисси членĕсем вĕсене ачасен ӳсĕмĕсене кура пайласа хакларĕç. Çĕнтерӳçĕсем, ытти çулти пекех, республикăри выставкăна хутшăнма ирĕк çĕнсе илчĕç.

Хаклав вăхăтĕнче Пĕтĕм Раççейри ирĕклĕ пушар хурал пĕрлешĕвĕн районти уйрăмĕн председателĕпе Елизавета Валежниковăпа калаçса илме май пулчĕ.

– Ирĕке кайнă вут-çулăмпа кĕрешекенсен, хамăр çăлавçăсен ĕçĕ-хĕлĕпе ачасене çывăх паллаштарни вĕсене пурнăç çине çиччĕ виçсе пăхма вĕрентет тетĕп. Çамрăк ăрушăн ку уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Вут-çулăм вăл тетте мар. Çакна шкула çӳрекен ачасем самантлăха та асран кăлармасан экономикăн çĕнĕ ӳсĕмĕсене те эпир шанчăклăрах пăхайратпăр, – терĕ ĕçсенчен чи тивĕçлисене суйланă май Елизавета Эрккменовна кун пек выставкăсен малашлăхĕ пуррине палăртса.

Кăçал 98 ĕçрен йĕркеленĕ выставкăна кăрлач – нарăс уйăхĕсенче нумай шкулти вĕренекенсем çитсе курнă. Унпа паллашса кашни хăйне валли ыррине илнĕ. Çакăн пирки комисси членĕсене çамрăк техниксен станцийĕн методисчĕ Надежда Филиппова каласа пачĕ.

Пĕтĕмлетӳ никамшăн та тавлашу çуратмарĕ. Художествăлла ӳнер пултарулăхĕпе 6 – 10 çулхисем хушшинче çамрăк техниксен станцийĕнчи пуçламăш техника моделĕн класне çӳрекен К. Яковлевăпа Шурчари тĕп шкулти Е. Рыжков ĕçĕсем çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕç. 11 – 14 çулхисенчен Шурчари тĕп шкулти А. Бардасовăна, 15 – 18 çулхисем хушшинче Калайкассинчи вăтам шкулта вĕренекен А. Кирилловăна çитекенни пулмарĕ. Декораципе илемлĕх творчествинче 6 – 10 çулхисем хушшинче Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулти А. Тодинов, 11 – 14 çулхисенчен Сосновкăри тĕп шкулти К. Семенов, 15 – 18 çулхисем хушшинче çамрăк техниксен станцийĕнчи Л. Соловьева çĕнтерчĕç. Техника тĕсĕсен творчествинче 11 – 14 çулхисем хушшинче Ильинкăри вăтам шкулта вĕренекен Ж. Косаревăна, 15 – 18 çулхисем хушшинче Шурчари тĕп шкулти В. Львовăна çитекенни пулмарĕ. Чи çамрăккисем хушшинче "Незабудка" ача садне çӳрекен Д. Александрова, "Солнышко" ача садĕнчи А. Тодинов тата "Незабудкăри" Г. Вениаминовпа "Солнышкори" М. Игрова малтисен шутне кĕчĕç. Вĕсем тата 2 – 3 вырăнсене тивĕçнĕ 25 ĕç районти ачасен ятне республикăра хӳтĕлĕç. Ытти çулхи пекех, кăçал та вĕсем хушшинче çĕнтерӳçĕсем пуласса шанатпăр.

**А. БЕЛОВ.**



**Автор сăн ӳкерчĕкĕнче: ĕççене хакланă самант. Сулахайран сылтăмалла: 37-мĕш пушар чаçĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене вăхăтлăх туса пыракан Ю. Варюхин, ВДПОн районти уйрăмĕн ертӳçи Е. Валежникова, çамрăк техниксен станцийĕн директорĕ О. Юлин, патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн аслă инспекторĕ О. Баскаков.**

Сывлăх

# Амăш телейĕ – ачасенче

Ача амăшĕ пулас тесе экстракорпораллă меслетпе (ЭКО) усă курни хальхи вăхăтра çĕнĕлĕх мар. Сывлăх тĕлĕшĕнчен амăшĕ пулма чăрмантаракан пăтăрмахсем пулнăран хĕрарăмсемпе арçынсем çак меслетпе усă кураççĕ. ЭКО меслечĕ хĕсĕрлĕхе сиплеме май паракан эффективлă майсенчен пĕри пулса тăрать, уйрăмах хĕрарăмшăн.

ЭКО меслетне, çие юлассине организмра мар, лаборатори условийĕсенче туса ирттернине, ятарлă программа тесе калаççĕ. Çак программа анлă. Вăл арçынпа хĕрарăма медицина тĕлĕшĕнчен те, психологи тĕлĕшĕнчен те пулăшу панипе, операципе, ама клетки аталаннине сăнаса тăнипе, ăна амалăха вырнаçтарнипе, хыççăн пулас амăшĕн сывлăхне тĕрĕслесе тăнипе çыхăннă.

ЭКО меслечĕпе усă курас текенсене Муркашри тĕп больницăри хĕрарăмсен консультацийĕн уйрăмĕнче кĕтеççĕ. Амăш телейне, çемье телейне ача-пăчара курас текенсене кунта пулăшма хатĕр.

**Муркашри тĕп больницăри**
**хĕрарăмсен консультаци уйрăмĕ.**

Редакци почтинчен

# Сăпка юрри – чи илемли

Сăпка юрри – амăшĕн чи малтанхи юрри. Пепке çак юрăна амăшĕн чĕри айĕнче выртнă чухнех илтет тата астуса юлать. Çуралсан, тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, çак сасса пин çын хушшинче те уйăрса илме пултарать.

Пирĕн аннесем çак юрăна пире çывăратма вырттарсан юрланă. Вĕсем çак юрăна юрласан ача лăпкă çывăрса каять тесе шухăшланă. Халĕ вара эпир, аннесем пекех, хамăр ачасене юрласа паратпăр. Чăнах та сăпка юрринче мĕн чухлĕ ачашлăхпа кăмăллăх. Çак юрăра амăшĕпе ачи хушшинчи пысăк юрату курăнать. Вăл амăшĕн чĕлхине ăнланмастьха, сассине илтсе вара лăпланать.

Ăсчахсем палăртнă тăрăх, мĕн пĕчĕкрен сăпка юррине илтсе çитĕннĕ ачан пурнăç туйăмĕ пысăкрах та çирĕпрех. Вĕсен усал шухăш-кăмăлсем те сахалтарах пулаççĕ.

Çавна шута илсе "Путене" ача садĕнче "Сăпка юрри ача пурнăçĕнче" ятлă мероприяти иртрĕ. Çакăнта ачасем кăна мар, амăшĕсем те хутшăнчĕç. Ачасене амăшĕсемпе пĕрле юнашар ларса сăпка юрри юрлама питĕ килĕшрĕ. Амăшĕсем çакăн пек мероприяти татах та кирлине палăртрĕç.

**И. КОЖЕВНИКОВА,**
**"Путене" ача сачĕн воспитателĕ.**

Асăрхаттару

# Чăххисене сутайман, укçасăр тăрса юлнă

Муркаш районĕнче пурăнакан 30 çултан иртнĕ хĕрарăм Интернет урлă ăратлă чăхсем сутма шутланă. Вăл пĕлтерĕве вырнаçтарнă хыççăнах ун патне "хăйĕн ĕçне тин кăна пуçарса янă фермер" шăнкăравлать, чăхсем туянма кăмăл пуррине пĕлтерет. Укçине вара банк картти çине куçарса пама шантарать. Сутуçă ку условипе килĕшсе палламан хĕрарăма банк карттин номерне тата телефон çине смс-хыпарпа килнĕ пароле пĕлтерет.

Кăшт вăхăт иртсен чăх сутакан патне банк учрежденийĕн хăрушсăрлăх службин сотрудникĕ тесе арçын шăнкăравлать, хĕрарăмăн банк картти çинчен 5000 тенкĕ илнĕ тесе пĕлтерет. Карттă çинчен урăх укçа ан илчĕр тесен çывăхра вырнаçнă терминалта темиçе ĕç тумаллине калать.

Карттă çинчен татах та укça илĕç тесе пăшăрханса ӳкнĕ хĕрарăм чăнах та çывăхри терминал патне çитет. Телефонпа шăнкăравланă "банк сотрудникĕ" панă инструкци тăрăх карттă çинчи укçана ун патне шăнкăравланă абонент номерĕсем çине куçарать.

Киле çитсен кăна хĕрарăмăн "пуç ĕçлеме тытăнать" – вăл преступниксемпе калаçнă иккен.

Ултавçăсем нумай чухне Интернет урлă тавар сутакан патне укçа йăнăш куçарса панă тесе шăнкăравлаççĕ, каялла тавăрса пама ыйтаççĕ. Хыççăн вара вĕсем май тупса карттăн хыçал енче çырнă код цифрисене те (трехзначный код) ыйтса пĕлеççĕ. Ăна пĕлнĕ хыççăн сирĕн счетпа çăмăллăнах "ĕçлеççĕ".

Астуса юлăр. Интернет урлă тавар туянас тетĕр пулсан, тавара почтăра алла иличчен укçа куçарса памалла мар йĕркепе усă курмалла.

Банк карттин пин-кодне, унăн реквизичĕсене никама та (банк сотрудникне те) ан калăр. Пин-кода карттă çине çырса ан хурăр, ăна уйрăм тытăр. Карттă çинчен укçа илме хăрушă мар вырăнта вырнаçнă тата видеосăнавпа хурал пур çĕрти банкоматпа усă курма тăрăшăр. Укçа илнĕ вăхăтра юнашар ют çын ан пултăр, укçа иличчен карттăна çăтакан тĕле, клавиатурăна тата банкомата хăйне тимлĕн пăхса илĕр. Ултавçăсем сирĕн карттăн номерне палăртма ан пултарччăр тесен, укçа илнĕ хыççăн чека унта пăрахса ан хăварăр. Банк сотрудникĕ тесе шăнкăравлакан çынна хăвăрăн счет реквизичĕсене ан калăр.

Телефон Интернетпа çыхăннă тата банкри счетпа ун урлă тĕрлĕ операци тăватăр пулсан, унта вируса хирĕç кĕрешекен программа вырнаçтармалла.

Палламан-пĕлмен çынран килнĕ смс-хыпарти ссылкăсем тăрăх нихăçан та ан кусăр. Сирĕн телефон "çине" асăрхамасăр, йăнăшпа укçа хурса панине, çавăнпа та ăна каялла куçарса пама ыйтса çыракансем те пур. Ан ĕненĕр.

Ултавçăсем Интернетра час-часах тавар сутакансем пек "ĕçлеççĕ". Çавăнпа та "тепĕр енче" мĕнле çын пулнине пĕлмесĕр нимĕнле электрон кошелека та укçа ан куçарăр, уйрăмах тавара туяниччен.

Çынсене улталанă факт сахал мар. Ултавçăсем темĕнле меслетпе те усă кураççĕ. Вĕсем е социаллă служба ĕçченĕсем, е Пенси фончĕн ĕçченĕсем, е банк сотрудникĕсем, е йӳнĕ хакпа çĕр виçсе документсем туса паракан кадастр инженерĕсем тесе те пĕлтереççĕ. Кĕскен каласан, укçаллă пулас тесе темĕн тĕрлĕ суяççĕ, çыннăн кăмăл-туйăмĕ вĕсене пачах та интереслентермест.

**С. ЕГОРОВ,**
**оперуполномоченнăй.**

Спорт

# Капитанпа салтака халалласа

Çӳлтикасси шкулĕнче вĕреннĕ, Чечен вăрçинче пуç хунă ФСБ капитанне Леонид Ильина тата Анатолий Лебедев салтака халалласа кунта йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕ иртрĕ. Кăçалхипе – 13-мĕш хут. Ăмăртăва Шупашкар районĕнчи ултă, Муркаш районĕнчи икĕ шкул тата Кӳкеçри "Улăп" спорт шкулĕ, тĕрлĕ ялти аслисемпе çамрăксем хутшăнчĕç. Старта 130 çын тухрĕ, вĕсенчен 106-шĕ – вĕренекенсем.

Ертӳçĕсен саламĕпе астăвăм сăмахĕсем хыççăн пухăннисем паттăрсене асăнса шăп тăнă хыççăн Асăну хăми умне чĕрĕ чечексем хучĕç.

Старта чи малтан кĕçĕн ӳсĕмрисем тухрĕç, çапла пĕр ушкăн хыççăн тепри ăмăртрĕ. Муркаш районĕн спортсменĕсем хастарлăхпа палăрчĕç.

2006 çулта çуралнă тата кĕçĕнреххисен йышĕнче Калайкасси шкулĕнчи Диана Соколова мала тухрĕ.

Кăшт аслăраххисен йышĕнче те çак шкулти Владислав Портнов тата Ксения Голубева 1-мĕш вырăнсем йышăнчĕç, Муркаш шкулĕнчи Игорь Белов тата Калайкасси шкулĕнчи Вероника Кузьмина – 2-мĕш вырăнсем.

Калайкасси шкулĕн аслăрах вĕренекенĕсем Светлана Охлинапа Ирина Сальникова хăйсен ӳсĕмĕнче 2 тата 3-мĕш вырăнсене тивĕçрĕç, Семен Голубев 1-мĕш пулчĕ, Петр Угаров – 3-мĕш.

2000 – 2001 çулсенче çуралнисен ӳсĕмĕнче ăмăртса Анастасия Кольцова тата Наталья Пушкина 1-мĕшпе 2-мĕш вырăнсене тухма пултарчĕç.

Аслисем хутшăннипе кăçалхи ăмăрту татах та анлăрах иртрĕ. 35 çултан иртнĕ хĕрарăмсен йышĕнче Яракри Валентина Голубева мала тухрĕ, Сыпайĕнчи Лариса Баранова финиша 2-мĕш çитрĕ. 40 çултан аслăраххисем хушшинче Муркашри Петр Белова çитекен пулмарĕ. Кĕçĕнрех арçынсенчен Калайкассинчи Леонид Данилов 1-мĕш вырăна тухрĕ, Яракри Алексей Щукин 2-мĕш пулчĕ.

Ăмăртура чи аслă йĕлтĕрçĕ Салапайкассинчи физкультура учителĕ, 59 çулти Владимир Ноздрин пулчĕ. Чи кĕçĕнни – 7 çулти Софья Глазунова.

Ăмăртура темиçе кубок çирĕплетнĕччĕ. Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулсем хушшинче выляттарнă кубока Калайкасси шкулĕ çĕнсе илчĕ.

**Н. СМИРНОВ.**

Атăльял.

# Мускавра мала тухнă

**Мăн Сĕнтĕр шкулĕнчи Эдуард Савельев тренерăн воспитанникĕсем нумаях пулмасть Мускавра çарпа патриот клубĕсем хушшинче иртнĕ алла-аллăн тытăçса кĕрешессин (рукопашные бои) çарпа патриот клубĕсен пĕтĕм Раççейри усă турнирне хутшăннă.**

Ăмăрту Раççей патшалăх физкультура, спорт, çамрăксен тата туризм университетĕнче иртнĕ.

Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче вĕренекен Максим Огадеров тата Тимур Толстов Чăваш Ен командин йышĕнче ăмăртнă. Пурĕ турнира 19 регионти 23 команда хутшăннă. Хĕрӳ кĕрешӳсенче ăсталăхпа палăрса Максим ăмăрту çĕнтерӳçи пулса тăнă, Тимур вара 3-мĕш вырăн çĕнсе илнĕ.

Чăваш Ен команди ăмăртура 1-мĕш вырăн йышăннинче вĕсен тӳпи те пысăк. Мăнсĕнтĕрсене малашне те ăнăçу сунатпăр.

**Хамăр инф.**

Прогноз погоды — По данным сайта rp5.ru

| День недели | Среда | | | | Четверг | | | | Пятница | | | | Суббота | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 |
| Облачность, % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура, °С | -12 | -8 | -5 | -5 | -7 | -5 | -4 | -5 | -11 | -10 | -3 | -4 | -7 | -5 | -2 | -4 |
| Ощущается как, °С | -18 | -10 | -10 | -10 | -12 | -11 | -11 | -10 | -17 | -16 | -9 | -11 | -14 | -12 | -7 | -8 |
| Давление, мм рт. ст. | 744 | 744 | 741 | 739 | 736 | 735 | 736 | 737 | 738 | 738 | 736 | 735 | 732 | 732 | 733 | 734 |
| Ветер: скорость, м/с | 3 | 1 | 3 | 3 | 3 | 5 | 6 | 4 | 3 | 3 | 6 | 6 | 6 | 6 | 5 | 3 |
| порывы, м/с | 7 | 4 | | 6 | | 9 | 11 | 8 | 6 | 6 | 10 | 11 | 11 | 11 | 10 | 6 |
| направление | Ю-З | Ю | Ю-В | В | С-В | С | С | С-З | С-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З |
| Влажность, % | 75 | 75 | 64 | 70 | 74 | 75 | 65 | 71 | 78 | 74 | 62 | 68 | 75 | 74 | 62 | 74 |
| Солнце: восход заход | | 05:52 | 18:07 | | | 05:49 | 18:09 | | | 05:47 | 18:11 | | | 05:44 | 18:14 | |
| Луна: восход заход | | 07:48 | 22:55 | | | 08:15 | - | | | 08:49 | 00:13 | | | 09:33 | 01:27 | |





**ТЕПЛИЦЫ**
**от производителя из сотового поликарбоната 3х6, 3х8 и т.д.**
**Телефоны:**
**8-917-651-00-76**
**8-927-858-28-79.**


Тав сăмахĕ

Атапай ялĕнче пурăннă Герман Аполинарович Степанова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн тăвансене, тусюлташĕсене, пускилсене, ял-йыша, Муркашри чиркӳ настоятельне Федор аттене, унта пынă мĕнпур çынна чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатпăр. Ун пек кĕтмен инкек, куççуль никамăн та ан пултăрччĕ.

**Пурне те ырă сунса амăшĕпе йăмăкĕсем.**

К сведению

**СОСТОИТСЯ ПРИЕМ ГРАЖДАН**
**Уполномоченным по правам ребенка**
**в Чувашской Республике Е.В. Сапаркиной**

**27 марта 2018 года** в рамках рабочего визита в Моргаушский район Уполномоченный по правам ребенка в Чувашской Республике Елена Владимировна Сапаркина проведет прием граждан по вопросам защиты прав и законных интересов детей.

Место проведения приема: каб. №308 в администрации Моргаушского района.

Время проведения приема: **с 10.00 ч. до 11.00 ч.**

Предварительная запись по телефону: 8(835)41 62-2-31.

Пĕлтерӳсем. Объявления


**Продаем: доски 25–50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 5-10.**

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**Тел.: 8-927-667-40-92 17-48.**

**Продаем пиломатериалы обрезные, кровельные 25 мм, половые 50 мм, брус любого размера; цемент. Доставка бесплатно. Цена договорная. Тел.: 8-903-346-40-58, 8-927-996-16-52. 10-10.**

**ОКНА. ДВЕРИ. ПОТОЛКИ.**
**Тел.: 8-962-599-65-62 2-10.**

**Продаю: ПЕСОК, ГРАВМАССУ, ЩЕБЕНЬ. Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58.** 55-77.

**Продаю сено в тюках, 1 укос; в рулонах – распродажа: 500 руб. Есть доставка. Тел.: 8-927-858-62-86. 4-5.**

* * *

**Продаю сено, солому в тюках и рулонах. Тел.: 8-927-665-88-82. 8-10.**

* * *

**Продаю сено в тюках (1 укос). Доставка. Тел.: 8-909-303-18-44. 3-3.**

* * *

**СПК «Ударник» приглашает на работу механизаторов на тракторы Террион, Т-150 и водителей на МАЗ и КамАЗ. Сдельная оплата труда, полный соцпакет. Тел.: 8-937-399-05-01. 2-2.**

* * *

**Филиалу ФГБУ «Россельхозцентр» по Чувашской Республике требуется механизатор для работы в Моргаушском и Ядринском районах. Тел.: 8(8352)51-44-12. 2-2.**

* * *

**Куплю скотину: бычков, коров, телок, молодняк; вынужденный забой. Тел.: 8-961-346-19-79. 2-13.**

* * *

**В КАФЕ «УЮТ» ( д. КАЛАЙКАСЫ) ТРЕБУЕТСЯ ПРОФЕССИОНАЛЬНЫЙ ПОВАР. Тел.: 8-903-322-16-16.**

* * *

**Индоутка кăвакал аçипе амине сутатăп. Тел.: 8-927-843-14-56.**

* * *

**Выльăхсем хаклă хакпа пуçтаратпăр: ĕне, вăкăр тата чирленĕ выльăхсем илетпĕр. Тел.: 8-919-974-46-14. 1-10.**

* * *

**Апрель пуçламăшĕнче виççĕмĕш пăруламалли хура тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-927-994-59-54.**

* * *

**МЕЖЕВАНИЕ, ТЕХПЛАНЫ по низким ценам. Тел.: 8-917-656-25-07. 1-2.**

* * *

**Çулталăкри хура-шурă тĕслĕ тынашки сутатпăр. Тел.: 8-937-385-73-03.**

**Кивелнĕ электропроводка – пушар хăрушлăхĕ! Специалистсем кил-çуртри электропроводкăна улăштараççĕ. Тел.: 62-1-37, 8-937-015-35-40. 1-10.**


Е. Андреев яч. хис. хуçалăх кунта сварщикра ĕçленĕ
**Зинаида Германовна**
**КУЗЬМИНА**
вилсе кайнă пирки тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви**
**Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**Редакципе издатель адресĕ: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, бухгалтери - 62-1-35,**
**пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36. E-mail: smi24@cap.ru, smi24-1@cap.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**
**Р – реклама материалĕ.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат юнкунсерен тата шăматкунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ А.П. Белов.**
**Пичете панă 20.03.2018 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4757.**

Номер набран и сверстан в АУ Чувашской Республики «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии АО "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.